24-мĕш çул тухать. Хакĕ 10 пус.

1941
ЯНВАРЬ
3
ЭРНЕКУН
2 (5717) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Уйхире юр ытларах тытса хăварар!

Социализмлă ялхуçалăхĕн иртнĕ çулти çĕнтерĕвĕсем пĕтĕм совет халăхне чĕререн савăнтарасçĕ. Çитĕнӳсем чăнипех те ĕнтĕ питĕ пысăк. Вĕсем татах та лайăхрах ĕçлеме хавхалантарасçĕ.

Гектартан çĕршер пăт тĕштырă туса илнĕ колхозсем, бригадăсемпе звеносем пирĕн республикăра пĕрерĕн кăна пулнă пулсан, халĕ вĕсем темиçе вуншарăн, çĕршерĕн шутланасçĕ. Çĕр — колхозлă пуян пурнăçăн иксĕлми çăлкуçĕ. Лайăх пăхса усранă май, вăл çулсерен ытларах та ытларах тупăш пама пуçларĕ. Ку ĕнтĕ çĕрĕçĕн пĕтĕмĕшле культури хăвăрттăн ӳссе пынинчен килет.

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансем хăйсен çитĕнĕвĕсене кăçал татах та ытларах ӳстерме пулчĕç. Сăмахран, Пелагея Наумова юлташ звени (Вăрнар р.) кăçал гектартан 300 пăтран кая мар тĕштырă туса илме сăмах панă. Халĕ звено хăллехи агротехникăллă мероприятисене пурнăçа кĕртсе пырать. Звено пуринчен малтан хăйĕн участокĕ çине юр тытса хăварма тытăннă. Вăрлăхсене сортласа пĕтернĕ, минераллă удобренисем хатĕрленĕ.

Вăйлă тырпул мастерĕсем уйхире юр тытса хăварас ĕçе пит те пысăк вырăна хураççĕ. Вĕсем ăна туни мĕн тери пысăк усă панине хăйсен ĕçĕнче тĕпчесе пĕлнĕ, ăнланса илнĕ.

Уя юр ытларах тытса хăварни кĕрхи тырăсене, çавăн пекех нумай çул хушши ӳсекен курăксене шăнса пăсăласран сыхлать. Уйхирти тачка сийлĕ юр çуркунне те ерипен ирĕлет, çавăнпа та юр шывĕ акнă лаптăка çуса юхса каймасть, вăл çĕр ăшне сăрхăнса кĕрет, çапла вара çĕр çителĕклĕн нӳрленсе юлать. Çĕр ăшĕнче нӳрлĕх çителĕклĕ пулсан, тырпул та вăйлăн ataланса ӳсет, ăна уяр çанталăк та пысăк сиен кӳме пултараймасть.

Уйхирсене юр çителĕклĕ тытса хăварни тырпул тухăçне ӳстерме пулăшать. Ана ĕнтĕ темиçе çулти опыт лайăх кăтартса пачĕ. Сăмахран, Калинин ячĕпе тăракан колхоз (Октябрьский р.) иртнĕ хĕлте юр тытмалли щитсене ултă хутчен пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçара-куçара лартнă. Уйри юрăн хулăмĕшĕ пур çĕрте те пĕр пекрех пулнă. Пĕр участокра юр тарăнăшĕ пĕр метр таран пухăннă. Çак участок çинче кашни гектартанах 22-шер центнер кĕрхи тырă пухса илнĕ. Юр хулăмĕшĕ çӳхерех вырăнсенче тырпул тухăçĕ сахалтарах пулнă.

Кун пек примерсем пирĕн республикăра нумай. Агротехникăллă мероприятисене пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пынипе пĕрле, уйхире юр çителĕклĕ тытса хăварсан кăна тырпул тухăçĕ пысăк пулма пултарать. Уйрăмăнах çакна шута илмелле: пирĕн республикăри колхозсен çĕрĕсем тӳрем мар. Сырмасем, сăртсем, тӳрем хирсем те нумай. Укекен юр пур çĕре те пĕр пек сапаланса тата тикĕслесе пухăнмасть. Хӳтĕрех вырăнсенче юр ытларах пухăнать пулсан, тӳрем мар, сăртлăрах вырăнсенчи юра çил вĕçтерсе кайма пултарать. Çакă вăл колхоз уйхирĕсене юр тытса хăварасси çине ытларах çавăрăнса пăхма хушать.

Хĕле кĕнĕренпе чылай вăхăт иртрĕ. Анчах республикăри чылай колхозсем хăйсен уйхирĕсене юр тытса хăварас ĕçе пуçăнманпа пĕрех. ВКП(б) Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ 1940—41 çулти кĕркуннехи-хĕллехи агротехникăллă мероприятисем çинчен йышăннă постановленине пурнăçа кĕртесишĕн вĕсем çине тăрса ĕçлемеççĕ. Чăхаклă вăхăта пушă сăмахсемпе сарăрççĕ.

Ĕçпе район нăçал 5500 гектар çинче юр тытса хăвармалла, ăна валли 30 мĕн щит хатĕрлемелле. Кунта халĕпĕтпе те 227 щит хатĕрлесе, 606 гектар çинче çеç юр тытса хăварнă. Канаш районĕнче те ĕçсем çавнашкалах тăраççĕ. Кунта 20 пин щит вырăнне 553 щит туса, 911 гектар çинче çеç юр тытнă, план тăрăх 6.800 гектар çинче тытмалла.

Чылай колхозсенче туса хатĕрленĕ щитсене уя вырнаçтарса лартмаççĕ. Сăмахран, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз (Çĕрпӳ хулинчи колхоз) анлă щит туса хатĕрленĕ, анчах вĕсене халĕ те уя кăларса лартман, пĕр гектар çинче те юр тытман. Çак районрах «Стахановец», «Заря», «Красный флот», «Красная Армия» тата ытти колхозсен руководителĕсем те уйра юр тытса хăварас ĕçе хакламаççĕ.

Райкĕрĕç пайĕсен тата чылай колхозсен руководителĕсем ВКП(б) Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ йышăннă постановленине пурнăçа кĕртессишĕн ответлă пулса тăнине туйса илеспĕн мар. Çакна хытă сивлемелле.

Уя юр çителĕклĕ тытса хăварас ĕçе тивĕçлипе туса пыма мĕн кирлĕ, вĕсем пур те пур. Ку ĕçпĕн çине тăни, тăрăшни кăна кирлĕ. Малта пыракан колхозсем укçа-тенкĕ нумай тăкăлмасăрах çак ĕçе анлăн туса пыраççĕ. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Пятилетка» колхоз членĕсем щитсем лартса тата çапăсем хывса 82 гектар çинче юр тытнă. «Красный Путиловец» колхоз (Çĕрпӳ р.) 3304 щит туса хатĕрленĕ, вĕсене уя кăларса лартнă.

Тăвай районĕнчи «Вторая пятилетка» колхоз членĕсен паха пуçарăвне палăртма тивĕç. Кунта кĕрхи тырăсен уйне 210 щит кăларса лартнă, виçĕ пине яхăн чăрăш турачĕсем кăларса пăрахнă. Унсăр пуçне хĕвелçаврăнăш аврисемпе чăрăш турачĕсенчен пирамидăсем туса вырнаçтарса тухнă.

Халĕ çанталăкĕ те лайăх тăрать. Татти-сыпписĕр юр çăвать. Апла пулсан, çак çанталăкпа усă курса колхоз уйхирĕсене юр ытларах тытса хăварассишĕн çине тăрса ĕçлемелле. Колхоз уйхирĕсенче пĕр тикĕс, хулăн сийлĕ юр выртăр! Кашни кун хаклă. Ку ĕçе вăраха тăсни сиен кăна кӳрет. Пĕр сехет вăхăта та сая ямасăр пуç колхозсенче те çак кунсенчех щитсем туса пĕтермелле, вĕсене кĕрхи тырăсем тата нумай çул хушши ӳсекен курăксем акнă вырăнсене кăларса лартмалла. Щитсем лартса тухнипе кăна лăпланмалла мар, юр пухăнса пынă çемĕн вĕсене пĕрмаях пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарса пымалла. Чăрăш тата ытти йывăççен турачĕсене, çатансене кашни колхозрах çителĕклĕ хатĕрлеме пулать. Унсăр пуçне чылай колхозсенче хĕвелçаврăнăш тунисем сахал мар. Вĕсемпе те усă курмалла.

Малта пыракан колхозсен опычĕ çакна кăтартса парать: щитсене тата ытти материалсене уя шахмат йĕркипе вырнаçтарса лартнин усси пысăкрах. Вăл юра пур вырăнта та пĕр тикĕс тытса хăварма пулăшать. Савăнăпа та юр тытса хăварас ĕçе тытăнсан çакна асăрхани кирлĕ.

Колхозсен уйхирĕсенче юр ытларах тытса хăварассишĕн кĕрешни—пит те пысăк ĕçсенчен пĕри пулса тăрать. Çак ĕçе тивĕслипе туса пымасан, вăйлă тырпул туса илесси çинчен калаçни пушă сăмах вырăнĕнче тăрса юлма пултарать.

Тепĕр уйăх çурăран партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ уçăлать. Конференци ячĕпе пуçланса кайнă социализмлă ăмăрту кунсеренех çĕнĕ вăй илсе пырать. Пĕтĕм çĕршыв конференци уçăлнă куна чаплăран та чаплă çĕнтерӳсемпе кĕтсе илме хатĕрленет. Çак ăмăртăва колхозсем, бригадăсем, звеносем, çавăн пекех ялхуçалăхĕнче малта пыракансен анлă массин хутшăнтăр. Уйхирсене юр çителĕклĕ тытса хăварассишĕн, ăмма лайăх вăрлăхсем хатĕрлессишĕн, ытларах минераллă тата вырăнти удобренисене пухассишĕн, агротехникăна вĕренессишĕн çине тăрса тăрăшни—çак ыйтусем социализмлă ăмăртура тĕп вырăн йышăнса тăмалла.

Эстони халăхĕ социализм çулĕ çинче

Эстони ССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕпе И. Лауристин юлташпа калаçни

Советлă Эстонири ĕççыннисем çĕнĕ 1941 çула савăнăçлăн кĕтсе илчĕç. Сталинла ăслă политика Прибалтикăри, Бессарабири тата Çурçĕр Буковинăри халăхсене мирлĕ пурнăç, ирĕклĕх пачĕ. Кунта капитализма ĕмĕрлĕхех гĕп тунă, совет власĕ туса хунă.

Аслă Совет Союзĕнчи тăванлă халăхсемпе пĕрле Эстони ССР Республикинчи рабочисем, хресченсем тата ĕçлĕ интеллигенци социализм çулĕпе малалла шанчăклăн пыраççĕ.

Пирĕн промышленность уйăхсеренех ӳссе пырать, продукци кăларасси ӳсет, ĕççыннисен экономикăпа культура тĕлĕшĕнчи пурнăçĕ лайăхланса пырать. Елĕк ĕç тупаймасăр пурăннă 20 пин çынна ытла производствăна явăçтарнă.

Промышленноçăн чылай отраслисем IV-мĕш квартал планне срокчен—икĕ уйăх хушшинче тултарнă. Сланец промышленноçĕнче те—Эстони халăх хуçалăхĕнче чи пысăк вырăн йышăнса тăракан отраслĕсенчен пĕринче пысăк çитĕнӳсем тунă. 1940 çулта сланец 1939 çултинчен чылай нумайтарах кăларнă. Вырăнти промышленность туса кăларакан продукци 1940 çулти октябрь уйăхĕнче, 1939 çулти октябрьтипе танлаштарсан, 29 процент ӳснĕ.

Промышленность продукцийĕн хисепĕ рабочисен шучĕ ӳснипе кăна мар, тата ĕç тухăçлăхĕ хăпарса пынипе те ӳссе пырать. Эстонири рабочисем халĕ ĕнтĕ хăйсен пурнăçĕпе хăйсем куçа. Халăх ырлăхĕшĕн вĕсем тăрăшса ĕçлеççĕ. Республикăра социализмлă ăмăртупа ударничество анлăн сарăлса пырать, производство новаторĕсен хисепĕ ӳссе пырать. Таллинри «Пунане Крулль» заводри слесарь В. Синивее ĕлтăр изобретени шухăшласа кăларнă, çав изобретенине усă курни ĕç тухăçлăхне темиçе вунă хут хăпартнă. Инженер Везилинд, мастер Креек тата врезеровщик Иванов шухăшласа кăларнă изобретенисем материалсене пысăккăн перекетлеме пулăшаççĕ. «Вега» заводри слесарь Паулус ĕлтăшăн изобретенийĕ ĕç тухăçлăхне 150 хут хăпартнă. Ытти вуншар рабочи-рационализаторсем пит хаклă сĕнӳсем панă, ав сĕнӳсем пысăк экономи параççĕ, ĕç тухăçлăхне чылай ӳстернĕ.

Хальхи вăхăтра предприятисенче ВКП(б) XVIII конференцийĕ ячĕпе ăмăрту сарăлса пырать. Ăмăрту çĕнĕ çитĕнӳсем тума пулăшать. Заводсемпе фабрикăсен коллективĕсем конференци ячĕпе илнĕ социализмлă обязательствăсене пурнăçлассишĕн кĕрешеççĕ.

Ĕçхресченĕсем те çĕнĕ пурнăçпа пурăнаççĕ тата çĕнĕлле ĕçлеççĕ. Елĕк батрак пулнисем 24 пин çын çĕр илнĕ, халĕ вĕсем хăйсен хуçалăхĕсенче кулаксемшĕн мар, хăйсемшĕн ĕçлеççĕ. Сахал çĕрлĕ 37 пин хресчене çĕр хушса панă. Кунпа пĕрлех вĕсене ялхуçалăх инвентарĕсем, выльăх-чĕрлĕх туянма, пурăнмалли çуртйĕрсемпе хуçалăх строительстви валли нумай сакăлăха кивçен укçа пăрса пулăшнă.

Ялсенче ялхуçалăхне механизацилесе пыраççĕ. Çуркунне чи малтанхи хут машинно-тракторнăй станцисем ĕçе тытăнаççĕ.

Ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе нумай ĕçсем тунă. IV-мĕш кварталта пурăнмалли çуртйĕр строительстви валли 5 миллион тенкĕ панă. Таллин хулинче çĕнĕрен 68 çурт тăваççĕ, вĕсенчен пĕр пайне 1941 çул пуçламĕшĕнче туса пĕтереççĕ. Халăха медицина енĕпе тӳлевсĕрех пулăшу памалла, государствăн социальнăй страхованине тунă.

1941 çулта халăха вĕрентес, халăх сывлăхне упрас ĕçсем валли укçа-тенкĕ парасси чылаях ӳсет. Социальнăй обеспечени енĕпе пулакан расходсем 100 хут ытла ӳсмелле. Буржуаллă государство бюджет тăрăх физкультурăпа спорт ĕçĕ валли укçа-тенкĕ уйăрса паман. Советлă Эстонире 1941 çулта çак ĕç валли миллионшар тенкĕ уйăрса памалла.

Ĕççыннисем СССР Верховный Совечĕн суйлавĕсене пысăк çĕкленӳпе хатĕрленеççĕ. Депутатсене суйлама кандидатсене халăхăн чи лайăх çыннисене тăратнă. Валгаскри чугунçул узелĕнчи рабочисем Национальноссен Советне депутата суйлама малта пыракан машиниста И. Круузи юлташа тăратнă. Вăл нумай вăхăт хушши ĕнтĕ йывăр тиенĕ поездсене пĕр аварисĕр тата простой тумасăр илсе çӳрет. Нарва суйлав округĕнче Кренгольмри мануфактурăри нумай станкопа ĕçлекен ткачиха Мета Лухайыв баллотировкăна тăнă. Депутатсене суйлама тăратнă кандидатсен шутĕнче—Хĕрлĕ Çар командирĕ, 20 çулти çамрăк, Эстонири çамрăксен чи лайăх представителĕ—Виктор Кихно. СССР Верховный Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсем, партири тата партири мар большевиксем, коммунизм ĕçне пĕтĕм чĕререн парăннă çынсем шутланаççĕ.

Эпир 1941 çула савăнăçлăн, пысăк çĕкленӳпе, большевикла партипе аслă Сталин ертсе пынипе социализм строительстви валли малашне те пысăк çитĕнӳсем тума хатĕр тăнипе кĕретпĕр.

Таллин. Декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС).

Аслă Совет Союзĕнчи тăванлă республикăсен çемьинче

Литва ССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕпе М. Гедвилас юлташпа калаçни

1940 çул Литва историне ылттăн страница пулса кĕрсе юлать. Литва халăхĕн чи лайăх ывăлĕсемпе хĕрĕсем, хăйсен пурнăçне шеллемесĕр, нумай-нумай çулсем хушши кĕрешни пурнăçа кĕчĕ. Литва ирĕклĕ пурнăçпа пурăнакан пулса тăчĕ, вăл сметоновла плутократин хаяр та ирсĕр режимне сирсе пăрахрĕ, аслă Совет Союзĕнчи тăванлă республикăсен çемьине кĕчĕ.

Литвара Совет власĕ туса хунă хыççăн нумай ĕçсем тунă. Çĕре, шултра промышленноçа, банксене, суту-илӳ тумалли шултра предприятисене тата тĕмовладенисене национализациленĕ. Çĕрсĕр пурăннă хресченсемпе батраксем, пурĕ 70 пин, çĕр илнĕ. Рабочисемпе служащисен ĕçуксийĕ икĕ хут çурă ӳснĕ. Çак вăхăт хушшинче выраннăй промышленноçăн металл ĕçлесен тата йывăç каскалакан предприятисем 19 предприяти, апат-çимĕç предприятийĕсем çĕнĕрен 5 ĕçе янă, вĕсен путĕнче Паневежиси сахăр тăвакан чи пысăк завод—Литвара виççĕмĕш шутланакан завод та. Заводсемпе фабрикăсем кăларакан продукци çурçул хушшинче 30 процент ӳснĕ.

Пире валли буржуаллă стройран йывăр наследство—ĕçсĕрлĕх юлчĕ. Кĕске вăхăт хушшинчех эпир 40 пин çынна ĕçе вырнаçтартăмăр.

Çамрăк Литва СС Республики культура строительстви енĕпе те пит пысăк çитĕнӳсем турĕ. Çĕнĕрен çĕршер шкулсемпе классем уçнă. Çитĕннисене вĕрентме вăтам шкулсем 11 шкул организацийленĕ. Совет власĕ тăвиччен Литвара çăвăн пек шкулсем пачах пулман, халĕ вĕсенче каçхине тата сырсарникунсенче 30 пин çын ытла вĕренет. Читальнясемпе библиотекăсем 200, халăх университечĕсем иккĕ, нумай клубсем, общеобразовательнăй тата ремесленнăй курссем тунă. Амбулаторисем шучĕ те ӳссех пырать. Пĕтĕм республикипех ялсенче медицина пункчĕсем уçнă, вĕсенче хресченсене гӳлевсĕрех пулăшу параççĕ.

Бюджетăн 49,6 процентне халĕ социаллă тата культурăллă мероприятисене, халăх сывлăхне упрас ĕçе расходлаççĕ. Çав расходсем буржуаллă Литва бюджетĕнче 8 процентран та иртмен.

1941 çулта капитальнăй, пуринчен ытларах промышленность тата коммунальнăй строительствăна укçа-тенкĕ нумайтарах хывма пăхнă. Чылай предприятисене тĕпренех реконструкцилемелле, вакă мастерскойсене пĕрлештерсе пысăк фабрикăсем тумалла. Çĕнĕ çулталăк пирĕнпĕн государство планне пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешмелли пĕрремĕш çулталăк пулать. Литва ССР Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, 1941 çулта çĕнĕрен 12 театр, государство циркĕ уçаççĕ.

1941 çулти майăн 1-мĕш тĕлне правительство учрежденийĕсемпе центральнăй организацисем Литва ССР столицине—Вильнюс хулине пĕтĕмĕшпех куçса çитеççĕ.

Çĕнĕ çулăн пĕрремĕш уйăхĕ пирĕншĕн пĕтĕм халăх савăнăçĕпе—СССР Верховный Советне депутатсем суйлассипе паллă пулса тăрать.

Эпĕ халь анчах ялсенчен тавăрăнтăм. Ялсенче те, пирĕн республикăри хуласенчи пекех, халăх хушшинче савăнăçлă туйăм, пысăк çĕкленӳ. Хресченсем политикăллă пурнăçа активлăн хутшăнаççĕ. Вĕсем коммунистсемпе беспартийнăйсен сталинла блок кандидачĕсем çинчен юратупа калаçаççĕ.

Литва халăхĕ малашлăх çине хăюллăн та шанчăклăн пăхать. Вăл хăйне вăрçă хăрушлăхĕнчен çăлнăшăн, пирĕн çĕршыва мирлĕ пурнăçпа пурăнмалла тата малалла ӳссе пымалла туса панăшăн Совет власне, чаплă Хĕрлĕ Çара, аслă Сталина хĕрӳллĕн тав тăвать. Эпир хамăр умма çакнашкал задача лартатпăр—пур енчен те Союзри советлă тăванлă республикăсене хуса çитмелле. Çак чаплă тĕллеве пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешетпĕр те ĕнтĕ эпир 1941 çулта.

Плана 135 процент тултарнă

«Техжирпромăн» Чăваш республиканчи конторин 1940 çула пысăк çитĕнӳсем çĕлерĕ. Продукци туса кăларасси тултарăлăкри планне 135 процент тултарса çитерĕ. Ĕç планне ытлашшипех тултарнăшăн Халăх Комиссариачĕ тăрăх «Техжирпром» вырăнти промышленность малти рабочийĕсене тухрĕ.

Ĕç новаторĕсене ытлашшипех тултарнăшăн Симонов стахановецсене хисеплĕ грамотăпа, Сорокин юлташа «отличник» значокĕпе наградăланă. «Техжирпромăн» Чăваш республикинчи конторин управляющийĕ Гамзин юлташа та «отличник» значокĕпе наградăланă.

Конторăна çитес кунсенче «Техжирпромăн» республикăри тресчĕ тума палăртнă. 1941 çулта çак трестăн çĕнĕ продукцисем туса кăларассине сарса пымалла.

С. ЕФИМОВ.

Çуркине лайăх хатĕрленекен колхозсем

Первомайски ялсоветĕнчи (Çĕрпӳ р.) Ильич ячĕпе тăракан колхоз членĕсем хăйсен çĕрĕ çинче торф нумай выртакăнăн шыраса тупнă. Халĕ кунтан çурри акмалли вырăна 160 тонна торф турттарса кăларнă. Удобрени тырпулă тухăçне ӳстерме пулăшать, çавăн та ĕнтĕ колхозниксем ытти тĕрлĕ удобренисем хатĕрлес тĕлĕшпе те çĕр тăрсах ĕçлеççĕ. Çĕрпӳ хулинчен 9 шăпа кашни кунах тислĕк тата ыт тĕрлĕ удобренисем турттараççĕ. 1 тонна фосфорит çăнăхĕ кӳрсе килнĕ, центнер чăх-чĕп тислĕкĕ, 4 центнер пухса хунă. Уйра юр тытма щитсем 200 штук туса хатĕрленĕ.

Çĕрпӳ хулинчен Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз çăкине хатĕрленес тĕлĕшпе иртнĕ çинчен нумай лайăх ĕçлет. Вăрлăхсене пĕтĕмпех сортласа хатĕрленĕ тата çĕн пахалăхне лабораторинче тĕрĕслеттернĕ. Вăрлăхсем пĕтĕмпех кондиçăлĕ. Выльăх-чĕрлĕх витисенче пухăнакан тислĕке кашни кунах уя турттарса кăлараççĕ. Колхоз тырпул тухăçне ӳстерессишĕн тăрăшнипе пĕрлех, çарансенчен те ытларах тупăш илме тăрăшать. Çаран çине 89 лав лаша тислĕкĕ турттарса кăларнă. Колхозниксен килĕсенче пухăнакан удобренисене тирпейлĕн пухса пыма йышăннă. Кайăк-кĕмĕк тислĕкĕ тата кĕл пухса пыма колхозниксене ещĕксем салатса панă, район центрĕнчи рабочисемпе служащисен килĕсенче пухăнакан удобренисене сутăн илме йышăннă.

Малта пыракан колхозсенчи колхозниксем агротехникăна лайăх вĕренеççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри стахановла шкулра 15 çын, агрокружокра 20 çын вĕренет. Колхоз агрономĕ Дрездина юлташ колхозниксене агротехникăна вĕрентес тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлет.

Т. МАЙОРОВ.

Вĕренӳри паха тĕслĕхсемшĕн

Чăвашсен педагогика институтĕнчи коммунистсемпе комсомолецсен пĕрлепӳллĕ пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху Пĕтĕм Союзри XVIII партконференцине пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илесси çинчен сӳтсе-явăрĕ.

Преподавательсемпе студентсен умĕнче тăракан задача—экзаменсене тата зачетсене «отлично» паллăпа ирттересси, вĕренӳ дисциплинине çирĕплетесси. Пуху партконференци ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнма, Пĕтĕм Союзри XVIII партконференцине вĕренӳри пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илме пулчĕ.

Я. Васильев.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

1-мĕш номерлĕ авиазавода наградăласси çинчен

Вооруженин çĕнĕ образецĕсене туса кăларас тĕлĕшпе правительство пана заданине ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕшĕн 1-мĕш номерлĕ авиазавода Ленин орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1940 çулти декабрĕн 31-мĕш.

1-мĕш номерлĕ авиазавод работникĕсене наградăлани

СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1940 çулти декабрĕн 31-мĕшĕнче кăларнă Указпа — вооруженин çĕнĕ образецĕсене туса хатĕрлес ĕçе вĕренсе çитнĕшĕн 1-мĕш номерлă авиазаводри работниксен пысăк группине СССР орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă.

Ленин орденĕпе И. И. Гладкова — цех начальникне, М. И. Гурьевича — главнăй конструктор заместителне, А. И. Микояна — главнăй конструктора наградăланă.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе 9 çынна наградăланă. Вĕсем хушшинче: М. Г. Анисимов—цех начальникĕ, А. Брунов—конструктор, Н. А. Воронин завод директорĕ пулнăскер, халĕ Х лăх Комиссарĕн заместителĕ, П. Дементьев — завод директорĕ, ма тан Ленин орденĕпе наградăланăскер П. Н. Лысов — цех начальникĕ, ма тан «Знак Почета» орденĕпе нагр дăланăскер т. ыттисем те.

Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе 8 çын наградăланă, «Знак Почета» ордене пе — 19 çынна, «За трудовую до лесть» медальпе — 24 çынна, « трудовое отличие» медальпе—27 çы на. (ТАСС).

Эпир хамăран ĕмĕтсене пурнăçа кĕртетпĕр

Çĕнĕ, 1941 çула совет çĕршывĕ хăйĕн хĕçпăллă вăйĕсен хăватлăхĕ ӳснишĕн, социализмлă промышленноçпа ялхуçалăх ӳсĕмĕшĕн хĕпĕртесе савăннипе кĕтсе илет.

1940 çулта туна çитĕнӳсемшĕн пĕтĕм çĕршывпа пĕрлех авиаци конструкторĕсем те мăнаçлăн савăнаççĕ. Вĕсем ывăнма пĕлмесĕр тата ăнăçлăн ĕçленипе Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ оригинальнăй конструкцийлĕ çĕнĕ самолетсемпе моторсем туянчĕç.

Хĕвеланăç Европăра пулса иртекен сывлăшри çăпăçусен опытне тĕплĕн пăхса тухса, çакăн пек вывод патне пыма пулать: кучухнехи самолетсем хăвăрт та пит çӳлте вĕçекенскерсем, пысăк калибрлă вооруженийлĕ, тата броняпа лайăхăн хӳтленнĕскерсем пулмалла. Эпĕ ертсе пыракан конструкторски бюро çавăн пек боевой машинăсем тăвас тĕлĕшпе ĕçлет те ĕнтĕ. Пачах вĕрçĕнĕ, усă курма пур енчен те лайăх сывлăш карапĕсем тăвассишĕн тăрăшса, эпир машинăсен çавăн пек пахалăхĕсем çинчен те манмастпăр, çав пахалăхсем машинăсене хăвăрт, массăллăн туса кăларма питех те кирлĕ.

Пирĕн авиацин талантлă конструторĕсен — çĕнĕ машинăсене тăвакасен пит чаплă кадрĕсем пур. Ина нерсем: В. В. Блудов, В. И. Тараса А. И. Коровкин, А. А. Тавризов, Б. Лещинер, Н. П. Кунн, С. А. Мороз тата ыт. те хăйсен мĕнпур вăйĕсе пирĕн авиаци хăватне вăйлатас ĕ хураççĕ. 1940 çулта большевикла па ти тата Совет правительстви авиа конструкторĕсен ĕçне пысăка хур хакларĕç, вĕсенчен чылайăшне Сов лизмлă Ĕç Геройĕн званине панăç.

1941 çул пире валли татах та пыс перспективăсем уçса парать. Эп хамăран нумай ĕмĕтсене, хăюллăха та техникăлă тухăмсене пурнă кĕртĕпĕр, пит чаплă хăвăртлăхпа та пит çӳлте вĕçекен самолетсем тă пăр.

ССР Союзĕнчи авиаци промышле ноçĕ хăйĕн çитĕнĕвĕсемшĕн аслă С лина тивĕçлĕ, мĕншĕн тесен вăл рĕн конструкторсен творчествăллă хăшне ертсе пырать, çул кăтартса рать, авиаци техникин мастерĕсе воспитани парса ӳстерет.

Социализмлă Ĕç Геройĕ авиаконструктор Н. Н. ПОЛИКАРПОВ

ЧАПЛĂ МАЛАШЛĂХСЕМ

Латви ССР Совнаркомĕн председателĕпе В. Лацис юлташпа калаçни

Латви халăхĕ 1941 çула пысăк шанчăклăхпа кĕрет, вăл çак çул пирĕн çамрăк союзлă республикăри социализмла строительствăн пур отраслисенче те çĕнĕрен пысăк çитĕнӳсем парасса шанса тăрать.

Империализмлă пĕрремĕш вăрçăччен Латви Россинăра промышленность енĕпе малта пыракан облаçсенчен пĕри пулнă. Анчах, буржуазипе помещиксем ӳçпулса тăнă çулсенче çĕршывăн экономики вăйлăн чакрĕ. Халĕ, Латвия совет халăхĕсен тăванлă çемьине хутшăннă хыççăн, вăл аслă Совет Союзĕнче ытти республикăсем пекех хисеплĕ вырăна йышăнчĕ. Унăн умĕнче хуçалăха тата культурăна аталантарса пымалли сарлака çул уçăлчĕ.

1941 çулта промышленноçа укçа-тенкĕ нумай хывмалла, оборудованисем туса кăларас ĕç çине ытларах çавăрăнса пăхмалла пулать. Уйрăмăнах машинăсем, станоксем, турбинăсем, моторсем, точнăй инструментсем сарлакан туса кăлармалла. 1941 çулта металлсем туса кăларакан предприятисене: «Красный металлург», ялхуçалăх машинисем туса кăларакан завода, гидротурбина заводне тата ытти заводсене аслăлатмалла, çĕнĕрен темиçешер заводсемпе фабрикăсем тумалла.

Ĕççыннисене куллен кирлĕ япаласем туса кăларасси ӳсмелле. Пир-авăр туса кăларасси, 1940 çулпа танлаштарсан, 1941 çулта 22 процент, çăм тканьсем туса кăларасси 55 процент, атăпушмак туса кăларасси 23 процент ӳсмелле. Апат-çимĕç промышленноçĕн продукцийĕ те ӳсет. 1941 çулта «Бекон экспортс» фабрикине туса пĕтеретпĕр, сахăр тăвакан тăваттăмĕш завода тума тытăнатпăр, вăл çулталăк хушшинче 15 пин тонна сахăр туса кăлармалла, çавăн пекех сахăр туса кăларакан виçĕ кивĕ завод продукци туса кăларассине ӳстереççĕ, çу кăларасси те чылаях ӳсмелле.

Латвин ялхуçалăх умне пысăк та пуян малашлăхсем тухса тăраççĕ. Помещиксемпе кулаксем тытса тăнă çĕр социализмлă государствăн харпăрлăхĕ пулса тăчĕ, ăна хресченсене панă. 1941 çулта тырпулсем, сахăр кăшманĕ, йĕтĕн, çĕрулми, пахча-çимĕçсем акăнакан лаптăксем аслăланмалла. Кирĕ отраслĕ—малтанхи пекех сĕт-çу хуçалăхĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси юлать.

Çуркунне республикăра машинăсем тракторнăй станцисем ĕçлеме тытăнаççĕ. Халĕ трактористсем хатĕрленĕ пилĕк шкул уçăлать.

1941 çулта халăха çутта кăларас валли укçа чылай уйăрма палăртăр. Хальхи вăхăтра 70 вăтам шкул шутланать. Çитес вĕренӳ çулĕнче вĕсен çĕпĕ 120 çити ӳсет. Латвинче хут пĕлменнисем 160 пин çын. Хутла пĕлменнисене вĕрентме пур çĕрте шкулсем уçăлаççĕ, 1942 çулта республикăра хутпĕлменлĕхе пĕтеретпĕ. Республикăн 576 пунктĕнче хĕрлĕ тессем, читальнясем тата клубсем ма укçа-тенкĕ паратпăр. Рига хулинче 1941 çулта государство библиотеки уçăлать, кинотеатрсен хисепĕ ӳсет. Латвин культурăллă пурнăçĕнче Латискусствин Мускавра пулса иртекен декади пысăк çитĕнӳ пулса тăмалла. Декадăна хатĕрленме тытăннă.

1941 çулта хуласенче виçĕ больницăн тата ялсенче темиçе больница строительстви пуçланать. Туберкулăхпа чирĕнчен сывалмалли 11 диспансера çуратмалли 14 çурт, вуншар ясликсем тăваççĕ, çаксем ĕлĕкхи вăхăра Латвире пачах пулман.

Пирĕн тĕп задача—Советлă Латви малта пыракан социализмлă республика тăвасси. Вăл Совет Союзĕнчи лăхсен аслă çемьин членĕн хисеплĕ ятне чыслăн тытса тăрăпĕ. Сталин Конституци ялавĕ айĕнче большевик парти тата Совет правительстви лăшнипе эпир çак задачăна ăнăçлă пурнăçлăпăр.

1941 çулти январĕн 12-мĕшĕнче Латви халăхĕ хăйĕн чи лайăх çыннисене СССР Верховный Советне суйлама Республикăри ĕççыннисем пысăк вăйăсăлăхпа суйлав кампанине хутăнаççĕ.

Совет Союзĕнчи тăванлă халăхсырă сунатпăр! Ирĕклĕхшĕн, телейлĕ пурнăçшăн пысăк тав, Латви халăхĕ пулас çутă пурнăç çулĕпе, этемлĕх гениййĕ, пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен çулпуçĕ аслă Сталин кăтартса панă çулпа пырать.

Рига, декабрĕн 31-мĕш. (ТАСС).

Профсоюз активĕн канашлăвĕ

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.). Çак кунсенче хулари профактивăн канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу Рязань облаçĕнчи Федякино ялĕнчи интеллигенци чĕнсе каланнине сӳтсе-явăрĕ.

Тухса калакан юлташсем хулари ĕççыннисем валли кашни уйăхрах çитнĕ докладсем тума, çитес ĕç-хутла пĕлменнисене вĕренĕ тарса вĕрентсе кăларма т. ыт. тума та пулчĕç.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Уйрăм коммунистсемпе çителĕклĕ ĕçлемен

Октябрьский районри парторганизацин пухăвĕ парти историне вĕренес ĕç мĕнле пыни çинчен сӳтсе-явăрĕ.

ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ ку тĕлĕшпе нумай ĕçсем тунă. Вĕренекенсене пулăшма тĕрлĕрен лекцисемпе консультацисем час часах ирттернĕ. Тата ВКП(б) райкомĕн секретарĕ В. Игнатьев юлташ нумай коммунистсемпе вĕсем парти историне мĕнле вĕренни çинчен калаçрĕ. Парти райкомĕн работникĕсем ку ĕç çинчен вĕсемпе калаçни коммунистсемшĕн питех те усăллă пулчĕ. Çакăн хыççăн коммунистсем лекци итлеме тата консультацисене ытларах çӳрекен пулчĕç Çавна май «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕсем тата ытларах тăрăшса вĕренме пуçларĕç. Гаврилов, Краснов, Васильев, Чурмакова тата ытти юлташсем те парти историне учебник тăрăх вĕренсе пĕтерсе, первоисточниксем тăрăх тĕплĕн, конспектсем çырса вĕренсе пыраççĕ.

Анчах ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ уйрăм юлташсен парти историне вĕренме пулăшас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлени палăрать. Çавна пула хăшпĕр коммунистсем хăйсен политикăллă пĕлӳне хăпартас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Акă, Тимофеев юлташ çулталăк хушши партин кандидатĕнче тăрать, анчах парти историне тĕплĕн вĕренмест. Тимофеевран ытти дисциплинине те часах пăсма пăхать. Вăл тăваттăмĕш уйăх ĕнтĕ члена укçи тӳлемен.

Парти кандидачĕ Анисов юлташ та унтан пĕртте уйăрăлса тăмасть. Анисов юлташ халиччен пысăк вырăнсен ре: роно заведующийĕ, унтан вăтам шкул директорĕ те пулса ĕçленĕ. Вăл хăйне-хăй парти историне çителĕклех пĕлекен çын тесе шутлать. Анчах Анисов юлташ парти историйĕн палла вырăнĕсене те астăваймасть.

Çавнашкалах Ефимов, Журавлев, Исаев тата Леонтьев юлташсем те «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» тăрăшса вĕренмеççĕ, вĕсем ик-виç çул хушшинче те II-мĕш сыпăка кăна вĕренсе çитнĕ.

Хăшпĕр юлташсем (Гришин, С. Журавлев, М. Мадянов, Хлебников, И. Максимов, Оков) харпăрхăйĕн пĕлӳне куллен хăпартса пыманнипе ВКП(б) историне вĕренсе пыманнипе улленхи ĕçре те паллă çитĕнӳсем ума пултараймасçĕ. Акă, Гришина члер. Вăл колхоз производствинче «ман нумай ĕçлеме ачапчам çук» тесе кăна ĕçлет. Гришин юлташ 1932 çултанпа парти кандидатĕнче тăрать, парти членне куçассишĕн тăрăшмасть. Кунсăр пуçне вăл июнь уйăхĕнченпе член укçи тӳлемесĕр пурăннă. 1940 çулта Гришин юлташ пĕр пухура та пулман.

Çак фактсем, паллах ĕнтĕ, ВКП(б) райкомĕн коммунистсем хушшинчи пропаганда ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе малашне тата ытларах ĕçлемелли çинчен калаççĕ.

Н. КАЯХОВ.

ХАÇАТСЕНЕ ПĂХСА ТУХНĂ ХЫÇÇĂН

Ултă ялсовечĕн шефĕ

«ЯНЧЕЛЛА. Туллимар вăтам шкул директорĕ прогульщике хӳтлет».

«ЯНЧЕЛЛА. Янчелла ялсовечĕ умва пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илет».

«ЯНЧЕЛЛА. «Новая сила» колхоз çĕнĕ клуб тăвать».

«ЯНЧЕЛЛА «Прогресс» колхоз ферми лайăх ĕçлет».

«ЯНЧЕЛЛА. Конституци кунне пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илет».

«ЯНЧЕЛЛА. «Победа» колхоз вăйлă тырпулăн».

«ЯНЧЕЛЛА. Колхозсем ăмăртăва тухрĕç».

«ЯНЧЕЛЛА . «Победа» колхоз умва çитĕнӳсемпе кĕтсе илет».

«ЯНЧЕЛЛА. Иванов юбилейне ирттерни».

«ЯНЧЕЛЛА. Агитаторсем бригадăсенче».

«ЯНЧЕЛЛА. «Победа» çулăпăр строительстви планне тултарчĕ».

Кунта эпир Красноармейский районри «Коммунизм çулĕпе» хаçатра пичетленнĕ заметкăсен ячĕсене илсе кăтартрăмăр. Вулакан кунта: Янчелла ялсоветĕнчи колхозсем уйрăмах пысăк тата малта пыракан колхозсем пулса тăраççĕ, çавăнпа хаçат вĕсем çинчен ытларах çырать, тесе шутлама пултарать. Анчах хаçат вăл принципа мар, урăххине мала хурать. Ку колхозсем редакцине сывăхарах тăраççĕ, çавăнпа вĕсем çинчен çырма çăмăлтарах. Çавăн пирки ĕнтĕ хаçат Янчелла ялсоветĕнчи колхозсен шефĕ пулса тăнă. Унăр пуçне хаçат странициче Албахтино, Исаково, Янгас, Красноармейское ялсовечĕсенчи колхозсемпе организацисен ячĕсене час-часах курма пулать. Вăл, паллах, начар мар. Вăл колхозсем çинчен те çырмалла. Анчах ытти колхозсем те ĕçлеççĕ вĕт-ха. Сăмахран, Çирĕклĕ, Кăмакал колхозĕсем çинчен мĕншĕн пĕр сăмах та çырмалла мар вара?

Çитменнине тата хаçат заметкисем нумай чухне пĕр ĕç çинченех калаçса çĕ. «Красная звезда» колхоз вăйлă тырпул туса илчĕ» тата «Пысăк тупăш» ятлă заметкăсене илер. Малтанхи заметкинче асăннă колхозри Л Ефимовпа Н. Филиппов колхозниксем ĕçкунĕ çине тырă нумай илни çинчен, тепĕр заметкинче çак колхозниксемех çĕрулми нумай илни çинчен сăмах пырать. Çак икĕ заметкăри пухăша пĕр заметкăрах каласа панă пулсан тĕрĕсрех пулатчĕ пулмалла. Тепĕр енчен, хаçатра яланах пĕр ялсовечĕсем çинчен çырни вулакансем-ĕн те интереслĕ мар.

Мĕнрен килнĕ-ха çак ситменлĕх? Хаçат редакцийĕ район центрĕнчен лякра тăракан колхозсенчи авторсене явăстарас тĕлĕшпе ĕçлемеллине (кар-и? Пирĕн шухăшпа, çавăнтан. Çакна редакцин шута илме кирлĕ.

Хаçат икĕ страницăллă тухать. Çак страницăсенчи вырăнпа пĕлсе уса курмалла. Районра 25 ялсовечĕ, вĕсен те 96 колхоз тата ытти организацисем пурринне манмалла мар. Парти, комсомол, профсоюз организацисен, культура учрежденийĕсен ĕçĕсене колхозсенчи паллă сынсен ĕçĕсенех тăтăшах сутатмалла, кашни ялсовет тĕнчи авторсен коллективне организацилемелле.

ВКП(б) райкомĕнче тена хаçачĕн отчетни итлерĕç

Декабрĕн 27-мĕшĕнче ВКП(б) Ишлей райкомĕ хăйĕн ларăвĕнче «Клевер колхозри стена хаçачĕн отчетне итлерĕ.

«Клевер» колхоз (Сăбайкасси ялсовечĕ) кăçалхи ялхуçалăх çулне аван вĕçерĕ. Государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татнă, кирлĕ фондсене пуçне 3 килограмм ытларах тĕштыра валеçеççĕ. Колхоз çурăкинче хатĕрленет. Анчах колхозра çитменлĕхсем те çук мар. Уйрăмăнах выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ Çуралакан çамрăк выльăхсене кĕтсе илессине организацилемен.

Çак çитĕнӳсемпе çитменлĕхсем çинчен стена хаçатĕнче тăтăшах сутатса пыма пур майсем те пулнă. Анчах стена хаçачĕ колхозри пуçламăш парторганизацин хаçачĕ пулса тăрать пулин те, унта коммунистсем пачах хутшăнса ĕçлемеççĕ. Уйрăмăнах парторганизаци секретарĕ М. Башмаков юлташ стена хаçачĕн ĕçĕпе интереслеймест. Стена хаçат редколлегинче пĕр коммунист та çук.

Кăçал стена хаçачĕ 5 номер çеç тухнă. Унта колхозри куллен пулса пыракан ыйтусене çителĕксĕр сутатни пулнă.

ВКП(б) райкомĕ стена хаçат ĕçне колхозниксене, коммунистсене анлăтхутшăнтарма, колхозниксемпе стена хаçачĕн задачисем çинчен час-часах калаçусем ирттерме тата ытти ĕçсене пурнăçлама хушса хăварчĕ.

С. Горланов.

Стахановла шкулсем организацилеНĕ

ÇЕМЕРЛЕ. (Хамăр корр.). Районри пылай колхозсенче стахановла шкулсем организацилеНĕ. Вăл шкулсене уйăрăн ĕçĕн мастерсем, бригадирсем, ферма заведующийĕсем вĕренме сӳреççĕ.

Молгачкинори «Молодая сила» колхозри шкула вĕренме 17 çын сӳрет. Ку тарăнччен икĕ заняти пулнă. Занятисене агроном Ефимова тата учитель Отников юлташсем ирттереççĕ.

Программа тăрăх пĕтĕмпе шкулта 6 ехет вĕренмелле. Занятисем ерипĕрре пулаççĕ.

1940 çулти декабрĕн 31-мĕшĕнче Чăвашсен Колхозлă Ялхуçалăх техникумĕ VI-мĕш выпуск турĕ. УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: техникумран «отлично» паллăпа вĕренсе тухнă юлташсем. Сулахайран сылтăмалла—М. И. Агеев, Ф. М. Майоров (Октябрьский районри «Кунăр» колхоз председателĕ), И. А. Гаврилов (Шупашкар районĕнчи «Хĕрлĕ Флот» колхоз председателĕ), Н. В. Васильев (Куславкка районĕнчи «Трактор» колхоз председателĕ), Е. Ф. Грабова (ЧАССР Верховный Совечĕн депутачĕ) тата Е. С. Занькова (Сĕнтĕрвăрриайонĕнчи «Большевик» колхозвенньеви).

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

Хĕрлĕ Çар воинĕсен присяги

1939 çулти январĕн 3-мĕшĕнче ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕ социализмлă сĕршыв воинĕсен çар присягин текстне çирĕплетнĕ,—çав присягин çак тексчĕ вăл ССР Союзĕн Сталинла Конституцийĕнчен тухса тăрать.

ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх çар присягине йышăнассин çĕнĕ йĕркине тунă,—унпа **çар присягине ушкăнпа мар ашши уйрăмăн тата кашниех алă пуса йышăнаççĕ.**

Çар присягине çакăн пек кашни уйрăмăн йышăнни пирĕн социализмлă сĕршыв Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе тунă пит пысăк çитĕнӳсене палăртса тăрать. Совет халăхĕн никам пăсайми моралле-политикăллă пĕрлĕхĕн никĕсĕ çинче çар присягине кашни уйрăмăн йышăнмалла туни халăх хăйĕн çарĕпе тачă çыхăнса тăнине тата совет патриотизмĕн хăватлă туйăмĕн палăрăвне кăтартса тăрать.

Çар присягине кашни уйрăмăн йышăнни Хĕрлĕ Çарăн боецĕсен тата командирĕсен ответлăхне—Совет правительствипе халăх умĕнче тупа тунине пурнăçа кĕртессишĕн ответлă пулассине туйăма ӳстерет. Ку вăл хальхи вăхăтра, тĕнчери лару-тăру çивĕчленсе кайнă чухне, ăраснах пит те кирлĕ.

1939 çулти февралĕн 23-мĕшĕ—çапла çĕнĕ присягине йышăннă кун—совет сĕршывĕн историне совет халăхĕ хăйĕн çарĕпе уйрăлми тачă çыхăнса тăнине кăтартакан политикăллă хăватлă демонстраци кунĕ пулса кĕчĕ. Çашни боец тата кашни командир халăр сĕршывпа халăх умĕнче тупа туса калана таса сăмахсем пĕтĕм тĕнчене илтĕнмелле хăватлăн янăрарĕç:

«Эпĕ, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн гражданинĕ, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн речĕсене ĕрсе, присяга йышăнатăп тата тӳрĕмăллă, хăюллă, дисциплинăллă, сывăлăхлă боец пулма, çар тата государство вăрттăнлăхне çирĕплĕн сыхласа срама, çар уставĕсене пурне те тата командирсен, комиссарсемпе начальниксен приказĕсене пĕр туртăнса тесăрах пурнăçа кĕртсе пыма чаплă тупа тăватăп.

Эпĕ вăрçă ĕçне тӳрĕ кăмăлпа вĕренсе, çар тата халăх пурлăхне пур майпе те упрама тата юлашки сывлăхпа хăйăнмалла туни халăх хăйĕн çарĕпе тачă çыхăнса тăнине тата совет патриотизмĕн хăватлă туйăмĕн палăрăвне кăтартса тăрать.

Çар присягине кашни уйрăмăн йышăнни Хĕрлĕ Çарăн боецĕсен тата командирĕсен ответлăхне—Совет правительствипе халăх умĕнче тупа тунине пурнăçа кĕртессишĕн ответлă пулассине туйăма ӳстерет. Ку вăл хальхи вăхăтра, тĕнчери лару-тăру çивĕчленсе кайнă чухне, ăраснах пит те кирлĕ.

1939 çулти февралĕн 23-мĕшĕ—çапла çĕнĕ присягине йышăннă кун—совет сĕршывĕн историне совет халăхĕ хăйĕн çарĕпе уйрăлми тачă çыхăнса тăнине кăтартакан политикăллă хăватлă демонстраци кунĕ пулса кĕчĕ. Çашни боец тата кашни командир халăр сĕршывпа халăх умĕнче тупа туса калана таса сăмахсем пĕтĕм тĕнчене илтĕнмелле хăватлăн янăрарĕç:

«Эпĕ, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн гражданинĕ, Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн речĕсене ĕрсе, присяга йышăнатăп тата тӳрĕмăллă, хăюллă, дисциплинăллă, сывăлăхлă боец пулма, çар тата государство вăрттăнлăхне çирĕплĕн сыхласа срама, çар уставĕсене пурне те тата командирсен, комиссарсемпе начальниксен приказĕсене пĕр туртăнса тесăрах пурнăçа кĕртсе пыма чаплă тупа тăватăп.

Эпĕ вăрçă ĕçне тӳрĕ кăмăлпа вĕренсе, çар тата халăх пурлăхне пур майпе те упрама тата юлашки сывлăхпа хăйăнмалла туни халăх хăйĕн çарĕпе тачă çыхăнса тăнине тата совет патриотизмĕн хăватлă туйăмĕн палăрăвне кăтартса тăрать.

Çар присягине кашни уйрăмăн йышăнни Хĕрлĕ Çарăн боецĕсен тата командирĕсен ответлăхне—Совет правительствипе халăх умĕнче тупа тунине пурнăçа кĕртессишĕн ответлă пулассине туйăма ӳстерет. Ку вăл хальхи вăхăтра, тĕнчери лару-тăру çивĕчленсе кайнă чухне, ăраснах пит те кирлĕ.

Генерал-полковник
О. И. ГОРОДОВИКОВ
☆ ☆ ☆

халăхсен ĕмĕтне—аслă совет халăхĕн пĕрлешес ĕмĕтне пурнăçа кĕртрĕ.

Çав паллă кунсенче, Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерӳллĕ полкисем хĕвеланăçри облассенчи çулсем тăрăх чаплăн та хăвăтлăн пынă чухне, Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе командирĕсем çар присягине çĕнле пурнăçа кĕртни тата тепĕр хут тĕрĕсленчĕ.

Чикĕ патĕнчи çапăçусенче, Вильнопе Львов хулисене штурм тунă чухне полесьери вăрмансенче, Польша офицерĕсен бандисене хирĕç кĕрешнĕ чухне Хĕрлĕ Çар хăй хăюллă, ăнлануллă тата дисциплинăллă çар организацийĕ пулнине кăтартса паче. Хĕвеланăç Белоруссипе Хĕвеланăç Украинăра пурăнакансем Хĕрлĕ Çарăн красноармеецĕсемпе командирĕсем çине пăхса, социализмăн аслă сĕршывмĕнле пурăннине тата хăйĕн ывăлсене мĕнле вĕрентесе ӳстернине курчĕç.

Мирлĕ халăх çине кĕтмен çĕртен перекоп бандитсене красноармеецсем хытă алăпа тыткаларĕç; çав вăхăтрах вĕсем Вильно хулинче çунакан çурт сенчен ачасене иле-иле тухрĕç, хăйсем çăкăра пансен пусмăрĕнче асапланнă ĕççыннисене пачĕç, вĕсем хăйсен кăкăрĕпе рабочисемпе хресченсене ыхларĕç, тискерленсе кайнă осадниксемпе полицейскисем тата жандармсем тапăнассинчен хăтарчĕç. Халăх Хĕрлĕ Çарăн кашни боецне, тĕнчери пĕртенпĕр çарăн, чуралăхпа пусмăртан хăтаракан çарăн представителĕ вырăнне шутласа, хĕпĕртесе тата савăнса кĕтсе илчĕ. Хăйĕн ирĕке кăларас задачине Хĕрлĕ Çар тивĕçлипе пурнăçа кĕртрĕ.

Империализмлă вăрçă вутне чĕртенсем кун хыççăн та чарăнмарĕç.

Ленинград сывăхĕнче, унтан мĕнпурĕ те 50—60 километрта, Финляндин правительĕсем темиçе çул хушши ĕçесе тимĕрпе бетонран çирĕп укрепленисем нумай тунă, кашни ялтах укрепленисем тăва-тăва лартнă, çулсем те кĕперсем айне минăсем хунă. Финляндин артиллерийĕ тупăран перекопинче Ленинград çине тивретмелли вырăнта позицисем йышăннă. Белофинсем Ленинграда, пролетариллĕ революци кĕрçне юнанă; вĕсем пирĕн çĕршывăн урçĕр-хĕвеланăç енчи чиккисем çине юнанă.

Империалистсем хĕтĕртсе тăнă Финляндин правительстви Совет Союзĕн чирлĕ сĕнĕвĕсене йышăнман кăна мар, совет çĕршывĕн чикĕри чаçĕсем çине провокацилле тапăнассине организацинĕ. Вăрçă пуçланса кайнă; ку вăрçă вăл «...Финляндин çарĕсемпе кăна мар, пылай çĕршывсенчи, çав хисеппех Англири, Францири тата ытти çĕршывенчи те, империалистсен пĕрлештернĕ хăйĕсене хирĕç...» çапăçни пулнă, ...вĕсем Финляндири буржуазине пурăнăçлă тата, пушшех те, артиллерипе тата самолетсемпе, çавăн пекех «доброволецсем» янă пек туса хăйсен сыннисемпе, хăйсен ылттăнĕпе тата темĕн тĕрлĕ снабженипе, Совет Союзне хирĕç вăрçа пур майпа та сарăлăпăрас тесе пĕтĕм тĕнчере хăйсем çинчен ăсталăхпа çапăçни пулнă. Финляндири вăрçăра тĕлĕнмеллех хăюллăх, паттăрлăх кăтартрĕ. Хĕрлĕ Çарăн хăватлă техники кăна мар çĕнтерчĕ, тата совет халăхĕн, унăн çарĕн çăватлă вăйăн çĕнтерчĕ. Совет чăсĕсен тĕлĕнмелле хăюллăхĕпе героллăхĕ боецсем мораль тĕлĕшпе çирĕп тата ăнлануллă пулнин, аслă совет халăхĕн никам çĕмĕрейми моралле-политикăллă пĕрлĕхĕн результачĕ пулнă.

Белофинсене хирĕç пынă çапăçусем тĕлĕнмелле хăюллă та паттăр ĕçсемпе чаплă пулса тăраççĕ, çав хăюллă та паттăр ĕçсенче социализм çĕршывĕн воинĕсем тупа тунин аслăлăхĕпе вăйă курăнса тăраççĕ.

Хĕрлĕ Çарăн чаплă боецĕсем «Тăван çĕршывăн!», «Сталинăн!», аслă Сталинăн образне чĕрере тытса тăшманем сине ыткăннă, вĕсене пĕтерсе тăхнă. Красноармеец Анатолий Койда кăртнă паттăрлăха пĕтĕм çĕршыв пĕлсе тăрать. Белофинсен пысăк отрячĕ полкăн штабĕн командирĕн пуйăнтне сыхласа кăкăрăкан ротăна пырса тапăннă. Тăшмансем пулемет расчетне стройран кăларнă. Çав вăхăтра Койда трактора боецсене валли боеприпассем тата çине ăсле пынă пулнă. Трактор çинчен ăнăсе аннă та, вăл пулемет патне пырса унпа противник çине çавтăрăнăлăн пеме пуçланă. Белофинсем малтан ним тăвайăмăн пулса ӳкнĕ, çапăн хыççăн каллех наступлени тума пуçланă. Анчах халăхăн шанчăклă çывăлĕ, чаплăн тупа тунине чĕрере тытса, тăшмансем çине хăюллăн ыткăннă. Койда примерĕпе хавхаланса пытă красноармеецсем те белофинсене хирĕç ыткăннă, вĕсене каялла хăваласа янă. Хăюллăх кăтартнăшăн Анатолий Койда ăн пысăк награда илме тивĕçлĕ пулнă—ăна Совет Союз Геройĕн званине панă.

Ун пек примерсене çĕршерĕн, пиншерĕн илсе кăтартма пулать, çав примерсем кашниех пĕр тĕллев çинчен — Хĕрлĕ Çар воинĕсем тăван çĕршывăн интересĕсене хăйсен юнне, хăйсен пурнăçне шеллемесĕр, юлашки сывлăш юлмичченех сыхлама хатĕр тăни çинчен калаçса паракаçрĕç.

«Финн кампанийĕшĕн нумай çар чаçĕсене, вунщăр пин боецсене, командирсене, политработниксене тата унăн пытă участникĕсене орденсемпе, медальсемпе тата отличин пытă знакĕсемпе наградăланă. Паллах, наградăлама тивĕçлисем шутсăрах нумай пулнă. Çакна орденсем илнĕ чухне наградăланисем хăйсемех çирĕплетсе начĕç. 405 çынна «Совет Союз Геройĕн» званине панă. Çакă вăл пирĕн—чи пысăк награда, вăл наградăна çавтери тĕлĕнмелле хăюллă ĕççемшĕн çеç паракаçрĕç.

Пĕр çак цифрăсемех ĕнтĕ пирĕн Хĕрлĕ Çарăн паттăрлăхĕпе героизмĕ çинчен калаççĕ. Пĕтĕм халăх Хĕрлĕ Çара юратнине, хăварах куратăр ĕнтĕ, халăх умĕнче пĕтĕмпех тӳрре кăларнă».

Совет государстви пуçлăхĕн çав сăмахĕсене—Хĕрлĕ Çар, дисциплина тĕлĕшĕнчен çӳлте тăнин тĕслĕхне кăтартса парса, хăй тăван çĕршыва панă присягăна чыслăн пурнăçа кĕртинне йышăнни пулать. Оборона Халăх Комиссарĕ çирĕплетнĕ дисциплинарнăй уставра çапла калана: «Совет çар дисциплини Хĕрлĕ Çарти пĕтĕм личнăй составăн класлă интересĕсем пĕрлех пулни çинче, вăл хăйĕн халăхне вĕсĕмсĕр парăнса юратса тăни çинчен ата Социализмлă Тăван çĕршыва пысăк ответлăха кашни военнослужащи туйса тăни çинче никĕсленсе тăрать».

Çар присягине йышăннă кашни военнослужащиех «çар ĕçне тӳрĕ кăмăлпа вĕренме пулатăп» тесе тупа тăвать. СССР Оборона Халăх Комиссарĕ С. К. Тимошенко,—вăл ертсе пынипе халĕ Хĕрлĕ Çар ĕçне юлашки вăхăтра пуллă вăрçăсен опычĕ тăрăх çĕнетсе тăрăхлатаççĕ,—çапла калать: «Çăсан та кăçан хамăрăн техникăна чаплăн вĕренсе алла илетпĕр, хăçан та хăçан хамăр çынсене вăрçас искусствăна вĕрентсе çитеретпĕр, çавăн чухне кăна пирĕн сахал юн тăкнипех çĕнтерме пултаратпăр». Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн боецĕсем хучухнеи условиченчи вăрçăн искусствине, вăрçăн кучухнехи средствисемпе çапăçас искусствăна çине тăрса вĕренсе алла илеççĕ. Вĕсем çар ĕçне тӳрĕ кăмăлпа вĕренеççĕ, çар дисциплинăне çирĕплетеççĕ, çапла майпа Хĕрлĕ Çара тагăс та хăватлăрах, социализм çĕршывĕн тăшманĕсемшĕн ăна тата ытларах хăрушă пулса тăракăн тума тăрăшаççĕ.

Присяга сăмахĕсене чĕрере тытса, хĕрлĕ воинсем Советăн çĕршывĕн чирлĕ те лăпкă пурăнăçне çивĕччĕн сыхлаççĕ, вĕсем пирĕн социализмлă тăван çĕршывăн интересĕсене тĕлĕнме хăтланакан кирек мĕнле тăшмана та кирек хăш самантра та пĕтерсе тăкма хатĕр тăраççĕ.

Коммунист ертсе пыракан фермăра

...плей районĕнчи «Коммунист» колхозăн общественниллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчеви...ипе районра начар мар ĕçлет. ...ьхи вăхăтра колхозăн пиллĕк ферми сĕт-çу, сысна, сурăх, чăх-чĕп, хур ...ми пур. Асăннă фермăсем валли ...ьăхсене планпа пăхнă чухлĕ илсе ...рнĕ.

...ĕт-çу фермине 1938 çултанпа ...(б) членĕ К. Федоров юлташ ертсе ...ать. Вăл фермăри ĕçсене зоотехни...хушнă пек йĕркелет. Çавăнпа Фе...ов ĕçлеме тытăннăранпа фермăра ... выльăх та вилмен. Вăтам шутпа ... çул хушшинче кашни пăру та...ра 580-шар грамм хутшăнса пынă. ...арник» ятлă кăçалхи пăру кашни ...кра пĕр килограмм таран хутшăнса ...пырать.

...ермăра ĕнесем пăрулас вăхăта ...е тăраççĕ. Пăрусене кĕтсе илме ...ĕн хатĕрленеççĕ. Ене пăруламалли ...т çитиччен 45—60 кун малараех сутарма пăрахтараççĕ. Ăшă çанкра пĕтĕ ĕнесене кунсеренех 2—3 т хушши ирĕкре уçăлтараççĕ. Ене ...улас вăхăт çитес умĕн 10—15 кун ...арах таса, ăшă пӳлĕме куçараççĕ. ... пӳлĕме куçариччен малтан ĕне ...лăхне сăнаççĕ.

...арусене амăшĕнчен уйăрса, уйрăм ...мсенче усраççĕ. Пăрусене те тĕрĕ ...ççĕ. Çавăнпа кунта çамрăк пăру сем вилни пулман, вĕсем сывлăхлă çитĕнеççĕ.

Вылăхсене пĕлсе, рацион тăрăх тăрантарни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Колхоз правленийĕ вылăх апачĕсене Федоров юлташа актпа уйăрса панă. Кăçал вылăхсем валли апат сахал мар хатĕрленĕ. Фермăн 81 тонна силос, 150 лав çулçăллă апат, 150 центнер çĕрулми, 170 центнер утă т. ыт. те пур. Вылăхсене тăрантарма çирĕп рацион тунă.

Фермăра 7 çын ĕçлет. Федоров юлташ вĕсем хушшинче зоотехника ыйтăвĕсем тăрăх калаçусем ирттерет, фермăри работниксене хăйсен пĕлӳлĕхне ӳстерме пулăшать. Фермăри работниксем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Ферма государство умĕнчи обязательствăсене тултарнă. Вăл кăçал колхоза 27 пин тенкĕ таса тупăш панă.

Витесем ăшă тата таса пулни вылăхсен апатне перекетлеме пулăшать. Çакна фермăра ĕçлекенсем аван пĕлсе тăраççĕ. Çавăнпа витене яланах таса тытаççĕ.

Коммунист ертсе пыракан ферма 1941 çулти Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулассишĕн кĕрешет. Халĕ фермăна выставкăна хутшăнтарма ыйтса заявлени панă, документсене йĕркелеççĕ.

Д. МИХАЙЛОВА.

Консультаци ирттерчĕç

...ЕРЛЕ. (Хамăр корр.). Декабрĕн ...инче древкомбинатра ВКП(б) ис... вĕренекенсемпе парти районĕн ...ультанчĕ комбинат директорĕ Его...таш юлташ «Марксистла диалектикăллă ...ăла тĕп паллисем» тема тăрăх ...ьтаци ирттерчĕ. Ку консультаци питех те интереслă ирттрĕ, унта 31 çын пулчĕ. Егоров юлташ консультацине ланах хатĕрленнĕ, ыйтусене тĕрĕс, ăнланмалла сутăтса панă.

Çитес консультаци январĕн 4-мĕшĕнче пулать. Ун чухне те консультацине Егоров юлташ ирттерет.

Колхозсен умĕнче тăракан задачăсем

Иртнĕ 1940 çул пысăк тухăçлă тырпул туса илнĕ çулталăк пулчĕ. Иртнĕ çулта çуракине вăхăтра тата пур енчен те тĕплĕн хатĕрленнĕ, çавăн пекех çуракине кĕске срокра ирттернĕ колхозсем уйрăмах вăйлă тырпул пуçтарса кĕчĕç. 1941 çулта татах та пысăкрах тухăçлă тырпул туса илес тесен çуракине халех хатĕрленсе пырас пулать.

Чи малтанах, колхозсенче çулталăкри отчетсене туса пĕтермелле, колхозниксемпе колхозницăсене ĕçкунĕсем тăрăх тивекен продуктсене тата укçа валеçсе тухмалла. Иккĕмĕш вăл — вăхăта вăраха ямасăр 1941 çул валли производствăна финанс планĕсене туса ситересси. Çакăнпа пĕр вăхăтрах ĕç нормисене пăхса тухмалла, вĕсене 1940 çулти опытсене шута илсе хăшпĕр улшăнусем кĕртмелле. Плансене тунă чухне тырпул тухăçне ӳстерме май пăракан колхозсенчи мĕнпур шалти ресурссене тĕплĕн шута илмелле. Плансем çинче тырпул тухăçне тата вылăх-чĕрлĕхсен продукцине ӳстересси палăлă пулмалла.

План пурнăçа кĕрсе пымалла пултăр тесен ăна тунă тата сӳтсе-явнă çĕре колхозниксене, çавнашкалах агрономсемпе воотехниксене явăçтармалла.

Чăваш республикинче ялхуçалăх специалисчĕсен çарĕ пысăк. Анчах чылай чухне çав специалистсемпе тĕрĕс мар усă курăççĕ. Тăтăшах колхозсенче, бригадăсенче, звеносенче тата вылăх-чĕрлĕх фермисенче пулса, вĕсене ĕçре агротехникăллă, зоотехникăллă мероприятисене пурнăçа кĕртсе пыма пулăшас вырăнне, часчасах агрономсемпе воотехниксем канцелярисенче ытларах лараççĕ. Вĕсем сводкăсем, резолюцисем хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Çавăн пек сиенлĕ практикăна, ялхуçалăх специалисчĕсемпе тĕрĕс мар усă курнă практикăна сивлеме вăхăт ĕнтĕ. Агрономсен тата зоотехниксен вырăнĕ — колхоз производствинче пулмалла.

Халĕ республикăри пур колхозсенче те ялхуçалăх машинисене юсас ĕçе вăйлатни кирлĕ. Машинăсем пăсăласран вĕсене çу сĕрсе, сарайсене майлаштарса лартмалла. Колхоз пурлăхне тирпейлĕ пăхса тăмалла. Ана çĕмĕрме, юрăхсăра кăларма юрамасть. Çураки çитессе кĕтмесĕр, халех, урапасене, лаша кӳлмелли хатĕрсене, çавасемпе çурласене тата вак-тăвак инвентарьсене йĕркене кĕртмелле.

Уя тислĕк кăларасси, торф, юшкăн тăпри, кăл хатĕрлесси, минеральлă удобренисем кӳрсе килесси, вăрлăхсене тĕплĕн тасатасси, уйра юр тытса купалантарас шутпа щитсем, çатансем, çапăсем лартса тухасси—çакăсем кашни колхозăн паян-ыран тумалли палла ĕçсем пулса тăраççĕ.

Вылăх-чĕрлĕх фермисенче хĕл вăхăтĕнче çамăк вылăхсене йышăнма тĕплĕн хатĕрленмелле. Витесенче пĕтĕ кĕсресем валли çутă тата ăшă уйрăм пӳлĕмсем хатĕрлес пулать. Пĕтĕ кĕсресене хăмлас умĕн, икĕ уйăх малтан тата хăмлана хыççăн 15 кун хушши ĕçрен хăтармалла. Ене витисенче те ларуламалли вырăнсем хатĕрлемелле, инструментсемпе медикаментсем çитĕнĕклĕ кирлĕ. Асăннă ĕçсене сысна тата сурăх фермисенче те вăхăтра ирттерес пулать.

Иртнĕ çулта Чăваш республикинчи чылай колхозсенче çамăк вылăхсене йышăнма начар хатĕрленкĕ пирки вĕсем вилкелерĕç. Çакна колхоз руководителĕсен кăçал тĕплĕн шута илмелле. Фермăсенче ĕçлекенсем çамăк вылăхсене йышăнма кирлĕ мероприятисене те йĕркелле туса пырсан, паллах, çамăк вылăхсене ăнăçлăн йышăнма, вĕсене пурне те тĕрĕс пăхса çитĕнтерме пултараççĕ. Тăрăшса, ĕçе юратса ĕçлени кирлĕ.

Вылăхсене хĕл каçарнă çĕрте вĕсен апачĕсене перекетлĕ тытказлани пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вылăх апачĕн запасĕсене тĕрĕс валеçсе тухмалла, çураки, çамăк вылăхсем валли чи лайăх апат уйăрмалла. Лашасене, вĕсен самăрлăхне кура, группăсене уйăрмалла, Начар лашасене уйрăман, вăйлăрах апатпа тăрантарас пулать. Çавна май, вĕсене çуракине самăр тата чăтăмлă пулнипе кăларма тăрăшмалла. Вылăх апатне перекетлĕ тытказламалла, ăна салатса пĕтермелле мар.

Чăваш республикинчи мĕнпур колхозниксене те çуракине тĕплĕн хатĕрленме, вылăхсене ăнăçлăн хĕл каçарма чĕнетĕп. Çавна май кăçал колхоз уйхирĕсенче пысăк тухăçлă тырпул туса илес, вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç те вăйланса пымалла пултăр.

П. И. ПУМПУР.

СССР Верховный Совет депутачĕ, Совет Союзĕн Геройĕ, авиаци генерал-лейтенанчĕ.

„Заря" колхоз мĕншĕн япăх ĕçлет?

(Йĕпреç районĕ)

«Заря» колхоз район центрĕнчен икĕ километрта кăна ларать. Коммунист Рябчиков колхоз председателĕ пулса ĕçлет. Анчах вăл колхоз ĕçне лайăх йĕркелессишĕн тăрăшмасть-ха.

Колхоз ку тарана çитсе юр тытма пуçламан, щитсем çук. Вырăнти удобренисене пухса уя кăларма васкамаççĕ. Колхозăн триер пулсан та вăрлăхсене тасатмаççĕ. «Вăрлăхсене тасатма Заготзерно пунктне турттарса каятпăр-ха»,—тесе лараççĕ. Хĕлле туса ирттермелли агромероприятисен планне кашни бригадăнах ситермен.

Колхозра ĕç дисциплини начар. Колхозниксем колхоз производствинче ĕçлес вырăнне ытларах килте ĕçлеме тăрăшаççĕ. Декабрĕн 18-мĕшĕнче тăваттăмĕш бригадăра 23 çынтан 6 çын анчах колхоз ĕçне хутшăннă. Бригадирсен арăмĕсем колхозра ĕçлемеççĕ. Иккĕмĕш бригадăри бригадир Игуменов арăмĕ 1940 çулта пĕтĕмпе те 6 ĕçкунĕ çеç тунă. Бригадирсем ĕçе çине тăрса тăвас тесе шутламаççĕ, унăнкунăн çӳресех вăхăта ирттереççĕ. Рябчиков çын çук тесе ӳпкелешет.

Колхоз тырпула пысăк тăкаланчăк па пухса кĕртрĕ; çĕрулмине якăр кăларса пуçтармарĕç, ăна шăнтса ячĕç. Кăларса хунинчен те 400 центнере яăн çĕртсе янă, 100 центнер выльăх кăшманĕ çĕрсе кайнă пирки çыран хĕрне кăларса пăрахма тивнĕ. Гектара яăн махорка пуçтармасăрах юр айне юлнă. Çакăн пек тӳнтерле ĕçсем лайăх ĕçлекен колхозниксене кӳрентермеллипех кӳрентереççĕ.

Выльăх-чĕрлĕхе пăхас ĕçре те савăнмаллиех çук. Колхозăн ĕне ферми пур, анчах пăрусене усрама ăшă çурт çук. Сыснасене усрамалли çурта ăшăтас, шăтăк-çурăксене питĕрес тĕлĕшпе нимĕн те туман.

Колхоз председателĕ Рябчиков колхоз активне большевикла ертсе пырса, ĕçе татăклăн тăвас вырăнне, пĕчĕк ĕçсемшĕнех бюрократла распоряженисем çырнипе вăхăта ирттерет. Распоряженисен айне бригадирсене «собственноручно подписались» тесе алă пустарнă. Кун пек распоряженисене теплерен кирлĕ пулĕ тесе тĕплĕн туса пырать имĕш. Паллах, колхоза большевикла ертсе пырасси распоряженисене çырса пынинче мар. Кун пек бюрократла распоряженисем нимĕн хакне те тăманнине 102-мĕш №-лĕ распоряженаванах кăтартса парать. Акă мĕн çырнă унта: «...письменнăй распоряженисем тлеместĕр (бригадирсем), путвалĕрĕк улмана кăларман, улма йывăçĕ çăтăкĕсене чавман, ĕçкунĕсене шутласа пĕтермен, бригадирсен ĕç дисциплини чаксах пырать... Бригадирсем Олашки хут асăрхаттаратăп тата ытти ерăсем йышăнатăп». Çакă-и вара колхоза лайăх ертсе пырас меслет? Ку пĕтĕмпех сиенлĕ ĕç пулса тăрать. Ку юрăхсăр ĕç вырăнне пĕтĕм актива пĕтĕртсе, колхозниксен активлăхне хăпартса пур ĕçе те вăхăтра туса пымалла, колхоз производствине хăпартма тăрăшмалла.

Агроном **В. ЗАХАРОВ.**

Вырăнти удобренисемпе кирлĕ пек усă курмалла

КУКЕÇ. Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ 1940 çулти декабрĕн 18-мĕшĕнче «Тислĕке сыхласа усрассине усă курас ĕçе организацилесси тата торфпа удобрени вырăнĕнче усă курасси çинчен» постановлени йышăнчĕç. Çак постановление районри малта тыракан колхозсем сӳтсе-явса, вырăнти удобренисене кирлĕ пек пăхса усрама тытăнчĕç.

Заводской ялсоветĕнчи «Осоавиахим» колхоз вырăнти удобренисемпе çулсеренех туллин усă курать. Колхоз иртнĕ çулта 2500 лав тислĕк, 5000 лав торф турттарса тăкнă. Вĕсемпе агрохимника хушнă пек усă курнă. Çавăнпа та колхоз кашни çулах пысăк тухăçлă тырпул туса илет. Вăтам шутпа тăваттă çул хушшинче кашни гектартан 19-шар центнер тĕштырă пухса илнĕ. Колхозниксем халĕ тислĕкпе торф турттарнă çĕрте хĕрсех ĕçлеççĕ. Пĕтĕмпе 950 лав тислĕк пухса тăкнă пулĕç ĕнтĕ. Тислĕке тăкма ятарласа уйрăм вырăн тунă. Колхозăн конюхĕсем витерен тислĕке кашни талăкрах 2 хут тасатаççĕ. Ĕçе мĕнле тунине старшин конюх тĕрĕслесе тăрать.

Чăкăр ялсоветĕнчи «Чăваш Коммуни» колхозра та вырăнти удобренисене кирлĕ пек пăхса усраççĕ. Кăçал 100 тонна кĕмелĕх навозохранилище туса хатĕрлерĕç. Унта халĕ кулленех 20—25-шер лав тислĕк турттарса тăкаççĕ. Пĕтĕмпе 800 лав турттарнă та ĕнтĕ. Çавăн пекех Шĕнерпуçĕнчи «Молния» колхоз та тислĕке лайăх пăхса усрать. Ку тарана çитсе 854 лав тислĕк турттарса хатĕрленĕ.

Районĕпе илсен, вырăнти удобренисемпе кирлĕ пек усă курманни, вĕсене тирпейлĕ пăхса усраманни уççăнах курăнать. Районра пĕтĕмпе 100 колхоз. Вĕсен кашниннех навозохранилищесем пулмалла. Анчах та халĕ пĕтĕмпе те 35 колхозăн кăна навозохранилищесем пур. Вĕсене те агротехника правилисене пăхăнса туман. Тислĕк 120 пин лав, торф 60 пин лав турттарса хатĕрленелле пулнă пулсан, тислĕк 7.388 лав, торф 15.490 лав çеç турттарнă. Уйрăм колхозсене илсен вырăнти удобренисене турттарас ĕç тата начар тăрать.

Сарабакасси ялсоветĕнчи «Тузи» колхоз 1800 лав тислĕк турттарас вырăнне 50 лав кăна турттарнă. Колхозра навозохранилище çук. Тислĕке сапаласа тăкаççĕ.

Çавăн пекех Шĕнерпуç ялсоветĕнчи «XI лет Октября» колхозра та вырăнти удобренисене кирлĕ пек пăхса усрамаççĕ. Колхозăн навозохранилище çук. Çавăнпа тислĕке пĕрер лавăн тăкаççĕ. Халĕ пĕрер лавăн тăкса 24 гектар çине сапаласа пăрахнă. Çакă ĕнтĕ агротехника правилисене пăсни пулать. Çак йĕркесĕрлĕхсене халех пĕтермелле.

П. НИКИТИН.

Федякино ялĕнчи интеллигенци чĕнсе калакинине пурнăçа кĕртер

Ĕçпе ответлеççĕ

Туçи (Çĕрпӳ р.) ялĕнчи интеллигенци федякинецсен чĕнĕвне сӳтсе-явнă хыççăн пысăк ĕçсем туса ирттерме палăртрĕ. Ялта лекторий тунă. Лекцисемпе докладсем вулама туллимар вăй шкулти учительсене, ветфельдшер, трахсестрана, акушеркăна, участокри зоотехника тата ялсовет депутачĕсене хутшăнтараççĕ.

Декабрь уйăхĕнче Сталинла Конституци çинчен тата коммунистла воспитани çинчен колхозниксене ăнлантарса панă. Çĕрпӳ хулинчи поликлиникăри медицина работникĕ Поэтникова юлташ ерекен чирсем çинчен калаçу ирттернĕ.

Учительсем хутпĕлменлĕхе кĕске хушăра пĕтерме обязательство илнĕ.

Малашне нумай ыйтусем тăрăх калаçусемпе лекцисем пулса иртмелле. Ялхуçалăх ыйтăвĕсемпе калаçусем ытларах ирттерме палăртнă.

Т. М.

Цех начальникĕ

Коммунист М. Кисляков юлташ—Канашри вагонсем юсакан заводри деревообделочнăй цех начальникĕ. Вăл хăйĕн цехĕнче агитацине массăллă ĕçе куçалăхлă задачăсемпе çыхăнтарса пынине пула, цехра большевикла йĕрке тунă. Ĕç дисциплини кунта, ытти цехсемпе танлаштарсан, çирĕп. СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1940 çулти июнĕн 26-мĕшĕнче Указ кăларнă хыççăн цехра пĕр прогул та пулман. Чăнах та, ноябрь уйăхĕнче Константинов слесарь ĕçе 18 минут хушши кая юлса пухнă. Çакăн çинчен чи малтанах «Деревообделочник» стена хаçачĕ вăйлăн питленĕ, цехри профсоюз комитетĕ рабочисен пухуне ирттернĕ, вĕсене ĕç дисциплининне çирĕплетсе пырас пулăшу тавра мобилизациленĕ.

Çавăнпа цехри рабочисем Кисляков юлташа юратаççĕ. Вăл производство командирĕ кăна мар, агитатор, рабочисем хушшинче калаçусем ирттерет, хаçат-журналсем вуласа парать.

— Эпир хамăрăн начальнике юрататпăр, вăл пирĕнпе яланах кăмăллă, пире ĕçре вĕрентет, дисциплина çирĕплетнине тата ĕçе пахалăхлă тунине юратать, — тесе каласа парать цехра 1937 çултанпа ĕçлекен П. Костычева работница.

Кисляков юлташ хăйĕн цехĕнчи кашни рабочи мĕнле пурăннине тĕплĕн пĕлсе тăрать, вăл кам мĕнле ĕçленине аван курать.

— Ман патăмра, — тесе каласа парать Кисляков юлташ, — Данилов юлташ ĕçлет. Малтанхи вăхăтра унпа чылай ĕçлеме лекрĕ. Вăл дисциплинăна пăхăнасшăн марччĕ, час-часах станоксене çĕмĕретчĕ, мастерсене итлеместчĕ. Пĕр çулталăк унпа ĕçлерĕм çавăн хыççăн Данилов чи лайăх, пирмеле рабочи пулса тăчĕ.

Кисляков юлташ хăйĕн цехĕнчи рабочисене хăратса мар, кăмăллă пулса сăмахпа вĕрентсе пырать, пичетпе усă курать.

— Эпĕ,—тет вăл,—рабочисене ятлама тата выговорсем пама юратмастăп, паллах, çавăн пек тунипе кăна çирĕп коллектив тума май çук. Рабочисене куллен-кун пулăшмалла, вĕрентмелле, воспитани памалла. Çавăн пек чухне çеç рабочисем дисциплинăллă пулаççĕ, кăйсен нормисене ытлашшипех тулларса пыраççĕ.

Нумаях пулмасть Кисляков юлташ цехри хутла пĕлмен рабочисене хутла вĕрентес ĕçе организацилеме профсоюз организацине пулăшрĕ. Гаврева, Зубов тата Гайнулин юлташсем хутла вĕренме занятисене çӳремен. Çакна сиссенех вăл вĕсемпе кашни цех уйрăмăн калаçнă. Çакăн хыççăн тепĕр кунтанах хутла пĕлмен рабочисем занятисене йĕркелле çӳреме пуçланнă.

Кисляков юлташ виçĕ çул хушши цех начальникĕ пулса ĕçлет. Цех кашни çул, кашни квартал планне ăнăçлăн тултарать, браксăр продукци туса кăларать. Михаил Корнилович пĕр-пĕр ыйтăва татса панă чухне яланах цехри стахановецсемпе каласать, вĕсене ĕçлеме хавхалантарать. Унăн цехĕнчи стахановецсем, сăмахран, Поляков, Ситкин, Анисимов, Герасимов, Юшманов, Игнатьев тата ытти юлташсем изобретательсемпе рационализаторсем пулланаççĕ.

Çаксем пурте производство командирĕн авторитетне ӳстереççĕ. Цех коллективĕ Кисляков юлташ пуçаруне хăйăрт ярса илет, вăл хушшинсене тăвăпах йĕркелле тата вăхăтра пурнăçлать.

И. КОРНИЛОВ.

Максим Горький ячĕпе тăракан 2-мĕш №-лĕ шкулта 7-мĕш класра вĕренекенсем каникул вăхăтĕнче йĕлтĕрпе сӳреççĕ (Шупашкар).

К. Бабаев фото-ӳкерчĕкĕ.

Республикăри снабсбытсем пирки

Предприятисен, суту-илӳ организацисен, стройкăсен ĕçĕсем, çавăн пекех продукцин хăйне туса кăларакан хакне йӳнетесси, йăлтах тенĕпек, снабсбытсен ĕçĕсене тĕрĕс йĕркеленинчен килет. Апла пулсан та çак ыйтăва республикăра ку вăхăтченех татса парайман-ха. СССР Совнаркомĕ 1940 çулти апрелĕн 5-мĕшĕнче йышăннă постановлени снабсбытсем йышлăн пулни ĕçре пысăк чăрмав кӳреççĕ, тесе палăртнăччĕ. Постановление кăтартса панисем пирĕн Чăваш республикине те тивеççĕ.

Пирĕн республикăра вăрман ĕçĕпе çыхăнакан снабсбытсем, заготовительсем тата представительсем питех те нумай. Вĕсем пурĕ 200 яхăн, Йĕпреçре—40, Улатăрта—35, Çĕмĕрлере—40 шутланаççĕ. Вĕсенчен çурринче яхăн законсăр ĕçлеççĕ, вĕсене финанс органĕсенче регистрацилемен. Укçа-тенкĕ операцийĕсене почтăсемпе перекет кассисем урлă туса ирттермеççĕ.

Республикăра мучала хатĕрлессипе кăна 15 организаци ĕçлет. Пуриншĕн те паллă, йышлă тата тĕрлĕрен снабсбытсем, представительсем у пламаççĕ, йăлтах урăхла, ĕçе йĕркелĕ туса пыма чăрмантараççĕ, япалсен хакне ӳстереççĕ.

Асăннă снабсбытсемпе заготовительсем тата представительсем корăсенче ĕçлеме пысăк аппарат тытаççĕ. Кашни представитель мĕнче бухгалтерсем, склад заведующисем, экспедиторсем, агентсем пур. Йĕпреç станцинче кăна аякри килнĕ представительсен аппаратсенче 130 çынна яхăн ĕçлет.

Хамăр республикăри кустпромысельсемшĕн мучала питех те кирлĕ чĕртавар пулса тăрать. Вĕсем çулсеренех темиçе çĕр тонна мучала кирлĕ. Ти республикăсемпе облаççенчен кӳме килеççĕ. Çавна май, вара республикăра чăпта хакĕ ӳсет. Çав вăхăрах аякран килнĕ представительсем спекулянтла хак парса республикăран темиçе çĕр тонна мучала урăхăна илсе каяççĕ. Сăмахран, законсăр ĕçлекен «Союзтабак сырьен» Улатăрти представителĕ Улатăрти райлезагран ытти облăсем валли кашни тонна мучалаш 1500-шер тенкĕ тӳлесе 24 тонна илнĕ.

Çакнашкал пулни вăрман хуçалăхĕсен, промартельсен ĕçĕсене пăлăмла чăрмантарать. Ыйăçсем тĕлĕпе те ĕçсем çакнашкалах. Чăваш республикинче ыйăç материалĕсителĕкĕсĕртерех пулсан та аякри килнĕ представительсем планс мĕнсĕр вуншар пин кубла метр ыйăç республика тулашĕнчи облаççе валли илсе каяççĕ. «Росзаготснаб» представителĕ Кирери мехлеспун ра 10.000 фесметр ыйăç, çавăн «Союзсредмашснаб» представитĕ Чăваш АССР Госпланĕ ирĕк памасть 5000 фесметр ыйăç илнĕ.

Пĕчĕк снабсем тата предстагельсем продукцисене пĕр-пĕрин гуянаççĕ. Çакăн пек законсăр ĕçкен снабсбытсемпе, заготовительсемпе тата представительсемпе решмелле. Вĕсен хисепне республикăра вăйлăн чакармалла.

Ыйăç материалĕсемпе ытти продукцисене республикăран план тăрăх çĕре ярас тата республикăра кирлĕ строительство материалĕсем пур потребительсемшĕн те кӳлме пысăк снабсбыт кирлĕ. Кăçал хăйĕн потребительсен умĕнчи обязательствисене представительсем пурнăçлама пултартăр. Çапăнпек чухне кăна продукци хакĕ те, продукцине плансăр кӳрсе каяссе кӳрсе килесси чакма пултарать.

Республикăра ытти снабсбытсем сахал мар. Сăмахран, Автоторгоресбыта тата Резиносбыта кăтартма пулать. Вĕсем иккĕшĕ автотракторнăй парка запаслă пусем парса тăрас тĕлĕшпе ĕçлеç Çак сбытсенчи аппаратсене ытлаш хăпартса янă пирки 1939 çулта кĕш те пысăк убытка курнă. Р сбытăн 29.400 тенкĕ, Автоторгосбытăн 29 800 тенкĕ убы пулнă. Çак организацин аппаратĕ 38 çын ĕçлет. Çакăн пек убыткă снабсбытсем пулни пачах усă Вĕсене иккĕшне пĕрлештерсе, ш ра 15—18 çын хăварсан, паллах, сем чаплăрах пулса пыма пулта пулĕччĕç.

Финанс органĕсем снабсбыт тĕрĕслесе тăрассине кирлĕ пек о низацилемен. Çавна май, вĕсем г ларство укçине усăсăр пĕтере Сăмахран, Швейпромсоюз снабс не 1940 çулта 2 çынна команди кăсенче çӳреме 18 пин тенкĕ палăртнă.

СССР Совнаркомĕ кăçалхи а лĕн 5-мĕшĕнче йышăннă постано ни тăрăх, снабсбытсен ĕçĕсене тах çĕнетсе урăхлатмалла. С сбытсен хисепне чакармалла представительсемпе «толкач пĕтермелле. Анчах çакă пирĕн публикăра пурнăçланса пыни ку масть-ха. Тивĕçлĕ органсен ĕçе лех тытăнмалла, снабсбытсен ĕ че çирĕп йĕрке тума вăхăт ĕнтĕ.

С. ГУРЬЕ

КРИТИКĂПА БИБЛИОГРАФИ

„ТЕЛЕЙ" ПИРКИ

Ик-виç çул каярах, Академи театрĕнче ĕçлекенсем, сцена çинче лартма çĕнĕ пьесăсем суккишĕн питĕ кӳренетчĕç. Чăн та ĕнтĕ, хăй вăхăтĕнче вăл пит те тĕрĕс пулнă, «Айдар» тата «Ялта» пьесăсемсĕр пуçне урăх тивĕçлĕ пьесăсем пулман тесе калама та юрать.

1940 çул ку тĕлĕшрен пĕр утăм малалла ярса пуснă çул пулчĕ. Кăçал çĕнĕ пьесăсем палăрчĕç. Анчах кунта тепĕр çитменлĕх пур — вăл хальхи пурнăç çинчен, паянхи кун çинчен лайăх, тĕплĕн çырнă пьесăсем çукки пулса тăрать.

Хăшĕсем çапла каласçç:

— Пьеса вăл драматурги ĕнĕпе пиçсе çитнĕ пултăр, ку пирвайхи условие, ытти тарама, чĕлхе епле пулсан та... теççĕ.

Ку шухăш тĕрĕс мар. Пирĕн шутпа произведенин пахалăхне чи малтан идея, шухăш, шухăшĕпе пĕрлех унăн чĕлхи, художествăллă çырни татса парать. Япăх чĕлхепе çырнă произведени вăл, паллах, художествăллă произведени пулма та пултараймасть.

Иероним Ясинский романист çинчен Н. С. Лесков авал çапла çырнă:

«Читая его произведения, я стараюсь прислушаться языку его действующих лиц. Все у него говорят одним голосом, одним языком. Все это один и тот же человек, подающий одним и тем же языком различные реплики, переодевающийся в разные костюмы и непохожий, ни на себя, ни на других. Много очисленные его герои расставляются им на ровной плоскости, в роде оловянных солдатиков, которых дети расставили друг против друга для сраженья. А сраженья-то и нет! Стоят они себе оловянными, мертвыми, безголосыми..»

Çак сăмахсене вуласан тӳрех С. Ялавин çырнă пьесăсем аса килеççĕ. Акă, унăн «Телей» пьесинех илер. Вăл пьесăн сюжечĕ çинчен калаçнă чухне автор çапла ăнлантарать:

— Пьесăн тĕп шухăшĕ — çынсен отношенисене кăтартасси, кĕрешӳре çынсем ӳснине кăтартасси, — тет. Юрĕ, тейĕпĕр. Пархатарлă та чыслă шухăш, тейĕпĕр. Анчах вулакан пьесăри çынсем ӳснине пĕрех те курмастьске!.. Малтанхи пайĕнче епле пулнă, çаплах курăнаççĕ вĕсем пьеса вĕçĕнче те.

... Пĕр пысăк комбинатра, технический директор пулса сăтăрçă Брагин ĕçлет. Унăн шăлнĕ те, физкультура инструкторĕ тенĕскер, çав картарах. Кусем пĕр енче. Тепĕр енче — совет инженерĕсем: Антонов, Куранов тата рабочисем. Малтанхи пайрах Брагин сăтăрла ĕçсем туни палăрать. Акă Брагин пирки пирвайхи картинăрах Антоновпа Куранов епле калаçаççĕ:

«Куранов: Асту-ха эсă, вăл çĕнĕ çуртсене мĕнле тутарать. Ун пек тунине эпĕ нихăçан та курман. Кĕтесене чалăш касса мар, тӳрĕ касса тутарать. Пумая пырас çук вăл кĕнессем».

Паллă-и Брагин сăтăрçă пулни Паллă!

Мĕн калать-ха кун пирки Антонов инженер? Акă итлĕр:

«Антонов: Ун çамки çине нимĕнех те çырман çав, çамки çине çырнă пулсан, час пĕлме пулĕччĕ те...»

Кулăшла калаçу, кулăшла доводсем совет инженерĕшĕн, пушшех те изобретательшĕн!

Иккĕмĕш пайĕн иккĕмĕш картининче Брагин хайхи Антонов проектне сирсе яма тăрăшать. Çав картинăрах Брагин сăтăр тунипе «компрессор çурăлса кайнă та икĕ рабочие йывăр амантнă».

Пьесăри çынсем, аманнă рабочисем таранах, Брагин сăтăрла ĕçсем тунине пурте пĕлеççĕ. Аманнă рабочи те «кунта, юлташсем, ĕç таса мар, кунта тăшмансем ĕçĕ палăрать...» тесе сасă парать, анчах ун сасси те ахалех путланать. Кĕçĕн Брагинĕ тата пĕр чарăнмасăр асса сӳрет, кладовойран пăта тата лак вăрланипе тытăнать, Стюшăран мăшкăлать, ирсĕр шухăшсем сарса сӳрет...

Брагинсен сăн-сăпатне, вĕсен ирсĕрлĕхне пьесăри çынсем пурте малтанах кураççĕ, час-часах ăна хăраткаласа та пăхаççĕ, анчах ĕç савăнпах пĕтет. Каласаççĕ, каласаççĕ... Каласпинех ирттерсе ярасçç. Çук, апла мар! Тăшманла ĕç палăрсан совет çыннисем апла шăла çыртса тăмаççĕ. Вĕсем хастаррăн ĕçе тытăнаççĕ, тăшмансене тăрă шыв çине кăларасçç, тепле пулсан та калаçнипе çеç ирттермеççĕ.

Стюшăна пулăшасси çинчен тата мĕн кăна каламаççĕ пулĕ! Акă Стюша юлташĕ — Плаки (ытти çынсем те çавах) пирвайхи пайран пуçласа пьеса вĕçне çитиченех ăна пулăшасси çинчен калаçать. Калаçать те савăнпах лăпанать. Пулăшма мар, ăна тăван пиччĕшĕ, Куранов инженер, йывăр çын кулянăшăн килтен хăваласа ярать! Ак сире, Ялавин шучĕпе, совет инженерĕсем епле пӳтсĕр!

Тăваттăмĕш пайĕн пĕрремĕш картининче паркра уяв пулса иртет. Физкультура инструкторĕ Брагин пиччĕш панă секретлă пакета ӳсĕр пуçĕпе паркрах кăларса ӳкерет. Ана тупаççĕ те, тивĕçлĕ çĕре кайса параççĕ... Тĕлĕнмелле! Брагин ӳсĕр пулман пулсан, вăл кĕсьерен пакета кăларса ӳкермен пулсан, Брагинсем усçăнах сăтăр туса пурăнатчĕç-ши?

Тăшмансем Ялавин пьесинче тăр ухмахсем. Секретлă хутсене ăçта кирлĕ унта пăрахса сӳреççĕ.

Çук. Тăшмансем пьесăра кăтартнă пекех ухмах мар! Çавтериех ухмах пулас пулсан, вĕсемпе кĕрешме те пит çăмăл пулнă пулĕччĕ. Кунта шухăшласа çитереймен. Пьесăран тухса тăракан мораль вăл пĕре те совет халăхне сыхă пулма вĕрентмест, тăшман çине каппайчăкла, çиелтен çеç пăхма вĕрентни пулать.

Юлашки сценăра вара, Брагина тытса хупнă хыççăн, пьесăри çынсем пурте савăнаççĕ: Антонов çемьи—ачăçуралнăшăн, унăн проектне Мускавра йышăннăшăн; Куранов — ирсĕр арăмĕпе уйăрăлнăшăн, ытти çынсем — Брагина тытса хупнăшăн. Вара пурте алă çупса çеç лараççĕ.

Хушăран пĕр каппайчăк старик пырса кĕрет (Антонов ашшĕ). Вăл вара мухтанса çеç каласать... Пьесăри пĕртен-пĕр колхозник сцена çинче çавăн пек кулăшла кăтартни, урăçурăм сӳпĕлтетнĕрни, тăрлавсăр мухтанăрни — ача вăййи патне илсе пырать. Мĕн тума кирлĕ пулнă-ши автора çавăн пек çăмăлтăй старик?

Çапла иртеççĕ пьесăри событисем. Тата çакă тĕлĕнтерет: Ялавин пьесинче такам та пур — инженерсем, рабочисем, сăтăрçăсем, шухă майра, колхозник, завком председателĕ, ИТР бюровĕн председателĕ т. ыт. те. Анчах автор пĕр «пĕчĕк» япалана макса кайнă — пьесăра парторганизаци куранмасть. Парторганизаци мар, пĕр коммунист та çук. Пĕр сĕрте, Куранов инженерпа пĕрле Ялавин парткома аса илет, вăл та пулнă парткома «ĕçленĕ» троцкист Хамаев çеç мĕн... Мĕн калассăн пур — кӳренӳллĕ ситуаци!.

Пьесăри çынсем мăка чĕлхепе, ситменнипе пурте пĕр чĕлхепе, калаçаççĕ. Пьесăри типсем çинчен каламалли те çук — вĕсем пиçсе çитмен. Ялавин произведенийĕсенче (ку пьесăра çеç мар) фольклор шăршине те курайман.

Çавăнпа ĕнтĕ, геройсем пĕр-пĕр сулăмлă сăмах калас пулсан «кăтра такка», е «мана ăшă та мар, сивĕ те мар» тенисĕр пуçне нимĕн те тупса калама пултараймаççĕ.

Мĕнле вывод тума пулать-ха çак пьеса пирки?

Чăн та ĕнтĕ, сюжет пур пулĕ. Анчах ăна та пулин шухăшласа çитереймен. Кирек епле сюжета та уçса пама пĕлес пулать, кашни геройне хăйĕн чĕлхипе калаçтарас пулать, геройсене чун кĕртес пулать, пурăнăç чăнлăхне çирĕплетме пĕлес пулать.

«Телейре» вара тĕрлĕ çынсене пухăна та йывăç мăлатук пек пуклак чĕлхепе пакăлтаттарнă. Кĕрешӳ çинчен каласа парать — кĕрешӳне кăтартман, çынсен ӳсĕмĕ çинчен автор шухăшламасть имĕш — ӳсĕмне кăтартман.

«Телей» чăнах та телейсĕр пулнă.

И. САЛАМБЕК.

Рузвельт сăмахĕ

ВАШИНГТОН, декабрĕн 30-мĕш. (ТАСС). Енер Рузвельт радио тăрăх сăмах тухса каланă.

Америка, тенĕ Рузвельт, халиччен нихăçан та хальхи пек пысăк хăрушлăхра пулман. Сентябрĕн 27-мĕшĕнче Берлинра виçĕ держава пактне алă пусрĕç, çав пакт вăл США-на хăрушлăх кӳрет.

Рузвельт Германие айăпласа каланă, вăл пĕтĕм тĕнчере хăй пуçпулса тăрастăн, тенĕ. Агрессивлă çĕршывсем тĕнчере пуçпулса тăрас е тĕнчене çапăçса илес шухăша пăрахма шутламаççĕ пулсан, США мир çинчен ыраккан калаçусене хĕтĕртме пултараймасть.

Хĕвеланăç полушарийĕ таврашĕнчи океансене контроллесе тăрас ĕçе ытти державăсем туртса илесрен сыхласси—США пурнăçĕшĕн кирлĕ ĕç. 117 çул каярах США Монроэ доктрини çине тăчĕ, çавăнтанпа ĕнтĕ США Атлантика океанĕн хураллĕнче тăрать. Унăн кӳрши — Англия. Атлантика океанĕнче тĕнĕл держависем США кӳрши пулса тăрсан, Англие пĕтерсе тăксан, тенĕ Рузвельт, США канăçлă пулма пултараймасть. Америкăри хăшĕр сынсем çапла шутлаççĕ: Англия пĕтсе ларсан та США-шăн хăрушлăх пулас çук, мĕншĕн тесен, Атлантикăпа Лăпкă океансем питех те пысăк, теççĕ. Çапла шутлани тĕрĕс мар, тенĕ Рузвельт. Халĕ вăл океансем парусллă пăтăрмахăнчи пек аслă мар. Унăпа Бразили хушшинчи пĕр вырăнти хушăна çĕнĕ йышши самолет 5 сехетре вĕссе тухма пултарать. Кӳчухнехи бомбардировщиксем те инçерех вĕçме пуçласа ç